Всесоюзная библиотека имени В. И. Ленина Отдел Национальной литературы

28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРЬ 25 ЫТЛАРИКУН 186(6937) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

„ПРАВДА" ХАÇАТĂН РЕДАКЦИНЕ

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ Ленин партийĕн боевой органне «Правда» хаçата унăн вунă пинмĕш номерĕ тухнă май салампаса ыррă сунать.

Вăтăр çул хушши ытла, 1912 çултан пуçласа, «Правда» халăх хушшинче яланах большевиксен партийĕн аслă идейисене сарса пычĕ, рабочисен класĕпе пирĕн пĕтĕм халăха çав партин чаплă ялавĕ тавра пĕтĕçтерсе пычĕ, ĕççыннисене помещиксемпе буржуйсен пусмăрне пĕтерессишĕн, совет влаçĕ туса хурса ăна çирĕплетсе пырассишĕн, социализм çĕнтерессишĕн кĕрешме хавхалантарса пычĕ. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче «Правда» совет çыннисене Тăван çĕршыва, коммунизм ĕçне чунтан парăнса ĕçлесе тăма вĕрентсе пычĕ, тăшманпа кĕрешес ĕçре çирĕп пулма чĕнсе тăчĕ, ĕçре тата çапăçу хирĕнче хăйсен пурнăçне шеллемесĕр паттăррăн кĕрешме хавхалантарса пычĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна шанса тăрать: «Правда» хаçат Ленинпа Сталин партийĕн идейисене вĕрентсе тăрас задачăна малашне те чыслăн пурнăçа кĕртсе пырĕ, большевикла сăмахăн вăйĕпе совет халăхне хамăрăн социализмлă аслă Тăван çĕршывăн хăватне тата ытларах ÿстерессишĕн, ăна экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен чечеклентерсе пырассишĕн çĕнĕрен чаплă ĕçсем тума хавхалантарса пырĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

Ленин — Сталин партийĕн боевой органĕ

Паян «Правда» хаçатăн вунă пинмĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ. Çакă вăл — большевикла пичетĕн мухтавлă летописĕнче пысăк та савăнăçлă кун пулса тăрать.

Вăтăр çул хушши ытла ĕнтĕ пирĕн «Правда» хаçат куллен-кун тухса тăрать. Çав вăхăт хушшинче историллĕ аслă ĕçсем пулса иртрĕç. «Правда» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ 1912 çулхи майăн 5-мĕшĕнче, Российăри рабочи класс, реакци тапхăрне пурăнса ирттерсе, буржуазипе помещиксен стройне хирĕç çĕнĕрен кĕрешĕве çĕкленнĕ вăхăтра, пичетленсе тухнă. Унăн вунă пинмĕш номерĕ çĕнĕ саманан—рабочи класăн историллĕ ĕçĕ çĕнтерсе чапа тухнă саманан чаплă кунĕнче тухать. Халĕ ĕнтĕ çĕр чăмăрĕн улттăмĕш пайне йышăнса тăракан пирĕн çĕршывра социализм идейисем этемлĕхĕн чĕрери ĕмĕтĕнчен чăн-чăн пурнăç пулса тăчĕç. «Правда» хаçат аслă çула утса тухрĕ. Унăн традицийĕсем чаплă та пархатарлă. Унăн сасси тулли хăватлăн янăрать. Ăна миллион та миллион çын юратса вулать. «Правда» хаçат чĕлхипе большевиксен аслă партийĕ калаçнине халăх пĕлет. «Правда» хаçат пирĕн парти идейисен ялавне тытса пырать. «Правда» хаçат вăл —парти ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пынă кĕрешĕвĕн çулĕ пулса тăрать.

«Парти членĕ ятĕнчен çÿлĕрех тăраканни урăх нимĕн те çук, пирĕн партин никĕсне Ленин юлташ хывнă тата ăна вăл ертсе пырать. Савăн пек партин членĕ кашниех пулма пултараймасть. Савăн пек партире членра тăнипе çыхăннă инкек-синкексемпе тăвăлсене кашниех тÿссе ирттерме пултараймасть. Рабочи класăн ывăлĕсем, нушапа кĕрешÿ ывăлĕсем, калама çук пысăк асапсемпе геройла вăй-хăватăн ывăлĕсем—акă камсем, пуринчен малтан, савăн пек партин членĕсем пулма тивĕçлĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ ленинецсен партийĕ, коммунистсен партийĕ, çакăнпа пĕрлех, рабочи класăн партийĕ ятне тытса тăрать». Сталин юлташ çĕнĕ йышши парти çинчен çакăн пек пĕтĕм чун-чĕрене хумхантаракан сăмахсемпе калать. Çĕнĕ йышши хаçат пулса тăрса, «Правда» хаçат Ленин—Сталин партийĕн ирĕкне палăртса тăрать.

Большевиксен партийĕн никĕсне хываканĕсем—Ленинпа Сталин пирĕн партин хаçатне тăвакансем пулнă. «Правда» хаçата вĕсем пуçарса кăларма тытăннă. Вĕсем вырăс пролетарийĕсене политика тĕлĕшĕнчен çутта кăларма, вĕсене рабочи класăн тĕп пурнăç интересĕсемшĕн кĕрешнĕ çĕре организацилеме тата пĕтĕçтерме тивĕçлĕ пулса тăракан хаçата организациленĕ. Малтанхи утăмсенчен пуçласах «Правда» хаçат çирĕп партилĕхпе палăрса тăнă. Унăн кашни выступленийĕ пысăк идейлăхпа çунса тăнă. Рабочисем хăйсен боевой хаçатне тупрĕç. Вĕсем пичетĕн çĕнĕ органĕн тивĕçлĕхне — хăйсен интересĕсемшĕн кĕрешекенĕн хăвачĕпе хастарлăхне, агитаторăн çулăмлă сăмахне çийĕнчех пысăка хурса хакларĕç. Çĕнĕ хаçатăн страницисенче вĕсем хăйсен пурнăçĕ çинчен каланă тĕрĕс сăмаха курчĕç. Çиелтен пăхсан буржуаллă пысăк хаçатсенчен каярах тăракан рабочисен сăпайлă хаçачĕ рабочисен шухăш-кăмăлĕсене палăртса пычĕ. Рабочи движенийĕн историйĕнчи чи хумханулла самантсем «Правда» хаçатпа çыхăнса тăраççĕ. Рабочисемпе работницăсем хăйсен пысăк мар бюджечĕнчен «Правда» хаçат валли материальнăй никĕс туса пама укçа-тенкĕ уйăрса панă. Ĕçре тар юхтарса тупнă, укçа-тенкĕ рабочисен хаçачĕн фондне татти-сыпписĕр пырса тăнă. Темĕпле инкек-синкексемпе чăрмавсене, цензура чăрмавĕсене, полици тапăннине, редакторсемпе сотрудниксене арестлесе ссылкăсене янине пăхмасăрах, «Правда» хаçат ÿссе çирĕпленсе пынă.

«Правда» хаçата партин чи лайăх çыннисем, рабочи класăн малта пыракан представителĕсем çырса тăнă. Лару-тăру лайăх мар пулнине кура юратнă Тăван çĕршывран вăхăтлăха уйăрăлса кайнă Владимир Ильич хăй ют çĕршывсенче пурăннă чух та хаçата тăтăшах ертсе пынă, унта çырса тăнă. Сталин чи йывăр та кăткăс тапхăрсенче хаçатăн редакторĕ пулнă. Свердлов, Молотов, Калинин унăн активлă сотрудникĕсем пулса ĕçленĕ. Вырăссен аслă писателĕ Максим Горький çĕнĕ прессăра рабочисен демократийĕ палăрса тăнине курнă. Кайрантарах, унăн ăслă сăмахĕ тăрăх, рабочисен çав демократине çĕр çинчи чи аслă демократи пулса тăма тÿрĕ килнĕ. Писателе хаçатăн беллетристика отделне ертсе пыма сĕнсе, Ленин Горькине çапла пĕлтернĕ: «Правда» хаçат рабочисем хушшинчи 20—30 пин вулакана тăтăшах марксистла шухăша вĕрентсе пырать», тенĕ.

Ĕçхалăх тăшманĕсем, çĕнĕ хаçат çуралсанах, унăн вăйне туйса илнĕ. Хăйне тăшмансен лагерĕ урса кайсах кураймн пулнишĕн «Правда» хаçат мухтанма пултарать. «Правда» хаçатран патша министрĕсем, меньшевиксен тăмсай пастырĕсем, социализма сутакан вак буржуаллă сутăнчăксем чĕтресе хăраса тăнă. «Правда» хаçат помещиксемпе буржуази стройне пыра-пыра çапнă. Вăл ĕçхалăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларнă, вăлах ĕçхалăхĕн суя тусĕсен сăн-пичĕсенчи маскăсене те сĕве-сĕве пăрахнă. Кивĕ Российăра «Правда» хаçата вăхăтлăха хупса лартма, унăн типографине аркатса тăкма, унăн сотрудникĕсене тĕрмене хупа-хупа лартма пултарнă, анчах большевикла шухăша, большевикла чăнлăха никам та вĕлерме пултарайман, вĕлерейĕмен те! Революциллĕ движенин пур тапхăрĕсенче те рабочи класăн боевой хаçачĕ яланах хăй вырăнĕнче тăнă, вăл парти ялавĕ тавра массăсене пĕтĕçтернĕ, вĕсене революциллĕ кĕрешĕве чĕннĕ, вĕсене историллĕ аслă ĕç ăнăçлă пулас шанчăкпа хавхалантарса çулăмлантарнă.

Ĕççынни массисен творчествăллă вăй-хăватне шанса, ĕненсе тăни—большевикла парти туса пыракан революциллĕ кĕрешĕвĕн чунĕ пулса тăрать. 1917 çулта Ленин—Сталин партийĕ, халăх пулăшăвĕ çине таянса, революци карапне вырăс çĕршывĕнчи пурнăçăн тăвăллă тинĕсĕ урлă Февральтен Октябрь патне çĕнтерÿллĕн илсе каçарчĕ. Парти чĕнипе малта пыракан рабочисем, хресченсем, салтаксем капиталистсемпе помещиксен влаçне сирпĕтсе антарчĕç те кивĕ Российăн ишĕлчĕкĕсем çинче советлă социализмлă çĕнĕ государство туса хучĕç.

Социализмлă революци тума хатĕрленнĕ чухне те, Октябрьти штурм вăхăтĕнче те, çĕнĕ, совет стройне туса хурса çирĕплетессишĕн кĕрешнĕ чухне те, ăна шалтипе тулашри контрреволюцирен хÿтĕленĕ чухне те большевикла «Правда» хаçат паллă вырăн йышăнса тăнă. Унăн вăхăт иртсе пынă май сарăхнă страницисем аслă событисен çулăмлă сывлăшĕпе сывлаççĕ. Вĕсенче — совет халăхĕн геройла кĕрешĕвĕн летопиçĕ. Вĕсенче рабочисем, хресченсем, красноармеецсем хăйсен мĕн тумаллине, çĕнĕ пурнăçа мĕнле тумаллине, революцире çĕнтерсе илнисене мĕнле хÿтĕлемеллине вĕрентекен канашсем тупнă...

Сталинла пилĕкçуллăхсенчи аслă ĕçсен саманинче, социализмлă индустриализаципе коллективизаци саманинче «Правда» хаçатăн сассине çĕнĕ строительствăри рабочисем тата парти чĕнипе çĕнĕ çул çине тухнă хресченсем илтсе тăнă. Хаçат социализм строительствин хастарлăхне палăртса пынă. Хаçатăн вăтăрмĕш çулсенчи страницисенче çĕнĕрен те çĕнĕ ĕçсен туйăмĕсем палăрса тăраççĕ. Хаçат çав тери аслă çĕршывăн экономикине тĕпренех урăхлатса çĕнетессишĕн, производствăн кучуххехи техникине вĕренсе алла илессишĕн, ĕç тухăçлăхĕн çĕнĕ нормисемшĕн, стахановла юхăмшăн, массăсен социализмлă ăмăртăвĕшĕн кĕрешет.

Хаçат пирĕн партин аслă ĕçне — хамăр çĕршыври миллионшар ĕççыннине политикăпа шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен пăхса çитĕнтерес ĕçе хутшăнса ĕçлет. Вăл социализмлă обществăн идейисене куллен-кун сарса пырать. Хаçат çав обществăн аслă принципĕсене ăнлантарса парать. Вăл социализмлă государствăн гражданинне хамăрăн Тăван çĕршыва, хамăрăн большевикла партине, коммунизм ĕçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăма вĕрентет. Ленинпа Сталинăн малта пыракан идейисемпе вĕрентсе çитĕнтернĕ пирĕн нумай миллионлă халăх хамăр çĕршывшăн тухса тăнă чи йывăр тĕрĕслĕре—Совет Союзĕ гитлерла Германие хирĕç туса пынă Отечественнăй Аслă вăрçăра хăйĕн аслă вăй-хăватне кăтартса пачĕ.

Паян «Правда» хаçатра «Ĕççыннисене Ленин—Сталин идейисемпе вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата совет халăхне социализмлă общество тума, совет çĕршывне хÿтĕлеме мобилизацилес тĕлĕшпе питех те паллă ĕçсем тунăшăн» Ленин орденĕпе наградăласси çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕ йышăннă Указ пичетленсе тухать. Çак сăмахсенче большевикла хаçатăн мĕнпур мухтавлă çулйĕрĕнчи ĕçне пысăка хурса хакланă. Çакăнпа ĕнтĕ хаçатăн вăрçă çулĕсенчи вырăнне те палăртса хăварнă.

Çав çулсенче большевиксен партийĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç, пирĕн Тăван çĕршывăн çĕрне Германи колонийĕ туса хума, пирĕн çынсене нимĕç капиталисчĕсемпе помещикĕсен чурисем туса хума хапсăннăскерсене хирĕç, нумай нациллĕ мĕнпур совет халăхне кĕрешĕве çĕклерĕ. Çав кĕрешÿре пирĕн çĕршывăн экономикăпа çар хăвачĕ, унăн çыннисен паттăрлăхĕпе çирĕплĕхĕ пысăк тĕрĕслÿ витĕр тухрĕ. Пирĕн строй та, пирĕн халăх та çав тĕрĕслĕве чыслăн тÿссе ирттерчĕç. Эпир хамăр халăхăн пĕтĕм тĕнчипе палăрса тăракан историллĕ çĕнтерĕвĕсене, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне алла хĕçпăшал тытса хÿтĕлерĕмĕр.

Большевикла «Правда» хаçат вăрçă вăхăтĕнче совет патриотизмĕн аслă идейисене сараканни пулчĕ. Хаçат хамăр çулпуçăн тата полководецăн, Сталин юлташăн сăмахне массăсем патне çитерсе тăчĕ. Вăл фронтри боецсемпе тылри боецсене тăшманпа кĕрешнĕ çĕрте çирĕп пулма чĕнсе тăчĕ, вĕсене ĕçре тата çапăçу хирĕнче паттăр пулма, вăя хĕрхенмесĕр кĕрешме, ĕçлеме хавхалантарса пычĕ. «Правда» хаçат малти линири боец патне, партизансен отрядне пырса тăчĕ. Вăл совет çыннисене чăнлăх çинчен, çав чăнлăх темĕн пек йывăр та хурлăхлă пулсан та, чăнлăх çинчен кала-кала пачĕ. Вăл совет хĕçпăшалĕн çĕнтерĕвĕсене çутатса пычĕ, миллионшар çынна паттăр ĕçсем тума хавхалантарса тăчĕ. Уçă çапăçура Германипе Япони агрессорĕсене çапса аркатса пирĕн халăхпа пирĕн Тăван çĕршыва ĕмĕрлĕхе чапа кăларнă вăрçă участникĕсен, совет патриочĕсен ĕçри хастарлăхĕпе паттăрлăхне хаçат тăтăшах çутатса тăчĕ.

«Правда» хаçатăн вунă пинмĕш номерĕ тухни тата ăна Ленин орденĕпе наградăлани большевикла шухăшăн, большевикла сăмахăн вăйĕпе чапне палăртса тăрать. «Правда» хаçатăн уявĕ — пĕтĕм совет пичечĕн уявĕ. Партин лайăх традицийĕ тăрăх, çак пысăк уявра та большевикла пичет работникĕсем, хăйсем ĕçре мĕн тумаллине пурне те тунă тесе шутласа, çитĕнÿсемпе лăпланса лармĕç. «Правда» хаçатăн ĕçне пысăка хурса хаклани парти журналисчĕсен мĕнпур отрядне, пуринчен малтан правдистсен коллективне, тата та хĕрÿллĕнрех, тата та ытларах вăй хурса ĕçлеме, малтан та маталла кайма хушать.

Пирĕн пичетĕн ĕçĕ питĕ анлă. Çĕршыв мирлĕ строительство тапхăрне кĕчĕ. Çĕнĕ пилĕкçуллăх пирĕн халăха тата паттăрăнрах ĕçлеме хушать. Халăх çакна пĕлсе тăрать: пилĕкçуллăх планне пурнăça кĕртни пирĕн Тăван çĕршыва экономикăпа çар тĕлĕшĕнчен тата хăватлăрах çĕршыв туса хурĕ, пирĕн культурăна чечеклентерме май парĕ. Халăх хăй геройла ĕçлесе çитĕнтернĕ çимĕçсене пухса илĕ, совет çыннисем вăрçăчченхи пек мар, тата пуянрах та культурăллăрах пурнăçпа пурăнма тытăнĕç.

Большевикла пичет пирĕн историллĕ самана хушнине тивĕçтерсе пымалла. Унăн рабочисемпе, хресченсемпе, интеллигентсемпе тата таччăнрах çыхăнмалла, — çав çыхăнура—пичетĕн вăйĕ. Ĕçре пуçарулăхпа пултарулăх ытларах пултăр,—çак паха тивĕçлĕхсемсĕр пичет малалла кайма, ÿсме пултараймасть. Пирĕн пичет, унăн никĕсне хываканĕ, унăн чи лайăх тусĕ Сталин юлташ вĕрентнĕ пек, кунпа мар, сехетпе ÿссе пымалла!

Вунă пинмĕш номер тухнă май ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Правда» хаçата саламласа, çапла каларĕ:

«ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна шанса тăрать: «Правда» хаçат Ленинпа Сталин партийĕн идейисене вĕрентсе тăрас задачăсене малалла та чыслăн пурнăçа кĕртсе пырĕ, большевикла сăмахăн вăйĕпе совет халăхне хамăрăн социализмлă аслă Тăван çĕршывăн хăватне татах та ытларах ÿстерессишĕн, ăна экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен чечеклентерсе пырассишĕн çĕнĕрен чаплă ĕçсем тума хавхалантарса пырĕ».

Ленинла-сталинла «Правда» хаçат малашне те аслă совет халăхĕшĕн, хамăрăн социализмлă аслă Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн ĕçлесе пырĕ!

(«Правда», сентябрĕн 24-мĕшĕнчи умстатья).

Чурачăкпа Шупашкар районĕсем Сентябрĕн 27-мĕшпе 28-мĕшĕнче массăллăн тырă пама хатĕрленеççĕ

Чурачăк районĕ государствăна тырă парас тĕлĕшпе кая юлса пынине шута илсе, сентябрĕн 28-мĕшĕнче массăллăн тырă леçес ĕçе организацилеме йышăннă. Кашни кун тырă леçессине чакармасăрах çав кун районĕпе 150 тонна тырă леçме палăртнă.

Иртнĕ çултипе танлаштарсан, Шупашкар районĕ кăçал государствăна чылай сахалрах тырă панă. Государствăна тырă парас тĕлĕшпе хăй çине илнĕ обязательствăна пурнăçа çителĕксĕр кĕртсе пынине шута илсе, сентябрĕн 27-мĕшĕнче кунта массăллăн тырă леçсе парас ĕçе организацилеме йышăннă. Çав кун 250 тонна леçсе пама палăртнă. Сентябрь уйăхĕн юлашки кунĕнче Шупашкар районĕ сахалтан та 700 тонна тырă леçсе пама йышăннă.

Воскресник итогĕсем

СĔНТĔРВĂРРИ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнерхи воскресника пурĕ 36 колхоз хутшăннă, вĕсем государствăна пурĕ 38 тонна тырă панă. Пуринчен ытларах «Волна», «Коминтерн», «Наука Ленина», «Первое мая» колхозсенче воскресник ăнăçлă иртнĕ, вĕсем 3—5-шер тонна тырă панă.

И. САЛАМБЕК.

ВОСКРЕСНИКА КИРЛĔ ПЕК ИРТТЕРЕЙМЕН

Шупашкарти Заготзерно пункчĕ 6—7 районри колхозсенчен тырă илет. Сентябрĕн 22-мĕшĕнче çак районри колхозсенчен 300 тонна ытла тырă йышăннă. Анчах та воскресника начар хатĕрленнĕ пирки иртнĕ кун чылай районсем, планпа палăртнă чухлĕ тырă леçеймен. Воскресник кунĕ Шупашкарти Заготзерно пунктне Шупашкар районĕ 69 тонна, Ишлей районĕ 60 тонна, Муркаш районĕ 29 тонна, Сĕнтĕр районĕ 24 тонна, Сĕнтĕрвăрри районĕ 6 тонна, Красноармейски район 10 тонна кăна панă. Çапла вара пĕтĕмпе те 198 тонна кăна тырă йышăннă.

* * *

Çĕрпÿ районĕнчи чылай колхозсем воскресника лайăх хутшăннă. «13 лет Октября» колхоз 30 центнер, Киров ячĕпе тăракан колхоз 39 центнер, «Кульмет» колхоз 22 центнер, Калинин ячĕпе тăракан колхоз 40 центнер панă. «Коминтерн» колхоз воскресника тивĕçлипе хатĕрленмен, Заготзернона чĕрĕ тырă нумай янă. Çавна пула çак колхозран 17 лав тырă йышăнман. Çавăн пекех «Цивильстрой» колхозăнне 11 лав тыррине те йышăнмасăр каялла янă.

* * *

Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем воскресник кунĕ 101 тонна тырă панă. «Комбайн» колхоз ĕнер государствăна тырă парса татнă. «Первое мая», «Молодая сила», «Волга», «Труд» Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем графика ытлашшипех тултарнă.

Анчах та районри чылай колхозсем тырпул парассипе чăтма çук начар ĕçлеççĕ-ха. «Красноармеец» колхоз 761 центнер вырăнне 426 центнер кăна панă, «Краснофлотец» колхоз 495 центнер вырăнне 208 центнер панă, Егоркинăри «Большевик» колхоз государствăна тырă памалли плана пурĕ те 50 процент кăна тултарнă. Çак колхозсем государствăна памалли тырра Заготзернон вырăнта организациленĕ склачĕсене памалла, çапах та вĕсем ĕçе кирлĕ пек организацилемен пирки тырă парасси чăтма çук начар пырать. «Красноармеец» колхозра МТС-ăн сложнăй молотилки пур, анчах та унпа туллин усă курмаççĕ.

2000 ЦЕНТНЕР ПĔР КУНТА

ЧУРАЧĂК, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер, воскресник кунĕ, районри колхозсем государствăна 2000 центнер тырă панă. «Прогресс», «Первое мая», «Шумашар», «Пучах», «Победа», «Большевик», «Заря», «Вторая пятилетка» пурĕ 8 колхоз государствăна тырă парса татнă.

10 КОЛХОЗ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРСА ТАТНĂ

ПЕРВОМАЙСКОЕ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). «Совет», «Большевик», «Авангард», «Заря», «Смычка», «Осоавиахим», «КИМ», «Алга», Буденный, Чапаев ячĕсемпе тăракан колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. Халĕ вĕсем хĕрсех авăн çапаççĕ тата кĕрхи çĕртме сухи тăваççĕ.

Государствăна тырă парассипе «Путь Ленина», «Дружба», «Правда», «Звезда», «Октябрь», «Сталинград» Ворошилов, Сталин тата Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсем юлса пыраççĕ. Каганович ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ И. Романов юлташ) иртнĕ вунă кун хушшинче государствăна пĕр килограмм та тырă паман. Кунта: тырă чĕрĕ, Заготзернора илес çук, — тесе лараççĕ. Анчах та тырра типĕтме сушилка туман.

Кубня ял Советĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра тырра типĕтме сушилка тунă, халĕ кунта кашни кунах пĕрер тонна тырă типĕтеççĕ. Çапла вара колхоз государствăна тырă памалли графика тултарса пыма пуçтарĕ.

Н. МИНИН.

ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ КОЛХОЗСЕМ

СĔНТĔР, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра малта пыракан «Первая борозда» колхоз (председателĕ С. Антонов юлташ), «Луч» колхоз (председателĕ Иванова юлташ), «Правда» колхоз (председателĕ Илугин юлташ), Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Суворов юлташ), Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Тямейкин юлташ) государствăна тырă памалли плана тултарчĕç.

Г. МОИСЕЕВ.

Тĕрĕс ертсе пыман çĕрте

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Тĕштырăсене пĕтĕмпех вырса пĕтермелли вунăкунлăх районри колхозсемшĕн питĕ хăварт иртрĕ,—тет районти çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Шипколин юлташ. Колхозсем çак вунăкунлăхра нимех те тăваймарĕç,—тесе пăшăрханать.

Районри çĕрĕç пайĕ тырпула уйран пуçтарса кĕртес ĕçре сведенисем пухнине чи кирли тесе шутлать. Анчах та кашни пилĕккунлăхра пĕрре тăвакан сводкăсене те ик-виç кун кая юлса туса çитерет. Çĕрĕç пайĕн работникĕсен çаврăнăçусăрлăхĕ çакăнтанах курăнать.

Районти çĕрĕç пайĕ тырпул пуçтарса кĕртес ĕçре колхозсене тивĕçлĕ пулăшу параймасть. Çĕрĕç пайĕн заведующине Шипколин юлташа «Красный Четай» колхоза конкретнăй пулăшу пама уйăрнăччĕ. Анчах та «Красный Четай» колхоз районра чи кая юлса пырать. Колхоз халĕ те тырă вырса пĕтермен.

Тĕштырăсене пуçтарса кĕртессине районти чылай колхозсем вăраха ячĕç. Çак вăхăта çитсе те тĕштырăсемпе пăрса йышши культурăсене 66 колхозран 22-шĕ кăна вырса пĕтернĕ. Малта пыракан колхсен опычĕсене ытти колхозсенче сармаççĕ. МТС та юлса пыракан колхозсене çителĕксĕр пулăшать. Тырпул пуçтарса кĕртмелли плана вăл пурĕ те 70 процент таран кăна тултарнă.

«Герой», «Красная Чувашия», «Будь готов», «Великан», «Красный маяк», Киров, Молотов ячĕсемпе тăракан колхозсем тĕштырăсемпе пăрса йышши культурăсене 65—70 процент таран çеç пуçтарнă. Тырпула уйхиртен пуçтарса кĕртес ĕç вăраха кайни колхозниксене ĕçе çителĕксĕр явăçтарнинчен килет. Акă, «Красный маяк» колхозра уйхир ĕçне колхозниксем 60 процент çеç хутшăннă. Ыттисем килти ĕçсене тăваççĕ, мăйăрта çÿреççĕ. «Герой», «Будь готов» тата ытти колхозсенче те колхозниксем кунне 6-шар сехет çеç ĕçлеççĕ: ĕçе ирхине 9 сехетре тухаççĕ, каçхине 5—6 сехетре таврăнаççĕ.

Паянхи куна тĕштырăсене вырса пĕтерме пур колхозсен те майсем пулнă. Районти руководительсем вăхăтра тивĕçлĕ мерăсем йышăнса пĕлсе ертсе пыманни кăна чăрмантарнă.

П. ТИХОНОВ.

Комсомолецсен пуçарăвĕ

СĔМĔРЛЕ. «Комбинат» колхоз иртнĕ çулсенче районра малта пыракан колхозсенчен пĕри пулнă. Кăçал юлса пырать.

Комсомолăн колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ В. Сарро) ĕçре ситменлĕхсене пĕтерсе, малти вырăна тухассишĕн кĕрешет.

Колхоз государствăна тырă парас тĕлĕшпе питĕ кая юлса пыратчĕ. Çак ситменлĕхе пĕтерес тесе, комсомолецсем пуçарнипе çĕрле авăн çапма çамрăксенчен бригада турĕç. Бригадăра пурĕ 20 çын. Вĕсем çĕр каçиччен ĕçлесе 5 тоннăран пуçласа 6,5 тонна таран çапаççĕ.

Çав комсомолецсем пуçарнипех çак иртнĕ кунсенче машина вырнă тырра çыхас ĕçре стахановла методпа ĕçленĕ.

Виçĕ колхозница Вера Сарро, А. Ильгачкина тата Т. Тарганова кунне 3.750 кĕлте çыхнă.

Вĕсем çапла ĕçлеççĕ: пĕри кĕлте çыххи тăвать, тепри çыхă çине вырнă тырра хурса пырать, виççĕмĕшĕ çыхса пырать.

Çапла вĕсем кунне улттăн ĕçлесе жнейка вырнă 5 гектар тырра çыхса пĕтереççĕ. Анчах комсомол организацийĕн пуçарăвне пур бригадăсенче те сарман-ха.

А. ТАНЬКОВ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

„Правда" хаçата Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Ĕççыннисене Ленинпа Сталин идейисемпе вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата совет халăхне социализмлă общество тума, Совет çĕршывне хÿтĕлеме мобилизацилес тĕлĕшпе питех те паллă ĕçсем тунăшăн «Правда» хаçата **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕ.

„Правда" хаçат редакцийĕн издательствин тата типографийĕн работникĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пичет ĕçĕнче ăнăçлă ĕçленĕшĕн «Правда» хаçатăн вунă пинмĕш номерĕ тухнă май СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх çаксене наградăланă:

1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе — Г. Ф. Александрова, С. А. Борзенкăна, В. А. Воличкăна, М. Р. Галлактинова, Б. Л. Горбатова Д. И. Заславские, Л. Ф. Ильичева, В. М. Кожевникова, А. И. Колосова, Е. В. Кононенкăна, В. С. Кружкова, П. Н. Крылова, М. В. Куприянова, Н. А. Соколова, С. Я. Маршака, Л. М. Леонова, Б. Н. Полевоя, П. Н. Поспелова, И. А. Рябова, К. М. Симонова, А. М. Сиротина, Л. С. Соболева, М. А. Сиволобова, Н. С. Тихонова, П. Н. Федосеева, М. А. Шолохова.

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—6 çынна наградăланă;
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—10 çынна;
Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 23 çынна;
«Хисеп палли» орденпа — 51 çынна;
«Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе — 61 çынна наградăланă. (ТАСС).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Белоруссири Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Белоруссири комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çарта тата партизансен отрячĕсенче нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ чухне паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн тата Белоруссири Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕ 25 çул тултарнă ятпа ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕ.

Польша Халăх Совечĕн вице-президенчĕ Г. С. Грабский Ют çĕршыв ĕçĕсен вице-министрĕ Г. Я. Берман тата Эвакуаци тĕлĕшпе ĕçлекен главнăй уполномоченнăй—Обществăллă администрацин вице-министрĕ Г. В. Вольский Киева килни

Çак кунсенче Украина ССР-ĕн столипине Киев хулине Польша Халăх Совечĕн вице-президенчĕ Г. С. Грабский профессор, унпа пĕрле Ют çĕршыв ĕçĕсен вице-министрĕ Г. Я. Берман тата Эвакуаци тĕлĕшпе ĕçлекен главнăй уполномоченнăй—Обществăллă администрацин вице-министрĕ Г. В. Вольский килнĕ.

Грабский господин тата унпа пĕрле килнĕ Польша правительстви членĕсем Украина ССР-ĕн правительстви умне поляк халăхне куçарса каяс тĕлĕшпе çыхăнса тăракан чылай ыйту лартнă. Украина ССР-ĕн правительстви вĕсем ыйтнине тума килĕшнĕ. Калаçусем пĕтнĕ хыççăн Украина ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Н. С. Хрущев патĕнче Польша Халăх Совечĕн вице-президенчĕ Грабский профессор ячĕпе апатлану пулса иртнĕ. Апатлану ăшшăн та туслăн иртнĕ.

Грабский господина тата унпа пĕрле килнĕ çынсене кĕтсе илнĕ чухне тата вĕсене ăсатса янă чухне çаксем пулнă: Украина ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ Д. Д. Мануильский, Украина ССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. С. Межжерин, Украина ССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕн ĕçĕсене туса тăракан В. И. Шиганский тата Украина ССР Совнаркомĕ çумĕнчи Эвакуаци тĕлĕшпе ĕçлекен управленин ответлă работникĕсем.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТМЕЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРАССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМАРТУ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕн сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне илнĕ даннăйĕсем тăрăх, процентпа, çулталăкри планран)

РАЙОНСЕМ	Лашасем	Мăйракаллă шултăра выльăхсем	Сыснасем	Сурăхсемпе качакасем
Канаш	104,8	97,2	141,3	130,9
Тăвай	104,5	100,0	125,3	124,0
Красноармейски	103,7	105,5	151,4	143,3
Советски	102,7	102,7	137,0	125,4
Сĕнтĕр	102,7	99,2	131,2	134,9
Çĕрпӳ	102,5	101,8	136,0	125,8
Элĕк	102,2	98,2	140,4	135,2
Вăрмар	102,2	106,3	135,2	129,7
Куславкка	102,1	96,1	116,1	118,6
Чурачăк	101,9	106,7	129,5	123,2
Октябрьски	101,7	101,8	131,8	125,9
Шăхасан	101,7	99,4	130,7	133,9
Калинино	101,5	98,8	138,0	119,8
Йĕпреç	101,4	97,4	110,9	127,5
Муркаш	100,9	103,2	149,2	133,0
Вăрнар	100,7	101,1	116,5	130,6
Сĕнтĕрвăрри	100,1	103,9	118,5	116,2
Етĕрне	99,9	103,2	112,8	128,3
Ишлей	99,7	100,9	132,5	134,8
Сĕмĕрле	98,7	101,6	114,2	122,7
Чкаловски	98,3	104,1	126,5	130,7
Шупашкар	98,1	100,5	114,2	117,1
Елчĕк	97,2	97,8	136,7	137,0
Комсомольски	96,9	98,9	127,6	124,8
Хĕрлĕ Чутай	95,8	102,7	120,9	136,1
Шăмăршă	95,7	99,6	104,1	139,9
Первомайски	94,9	102,2	103,6	132,8
Пăрачкав	94,1	98,3	106,1	122,0
Кувакино	92,1	97,0	102,7	130,3
Улатăр	92,0	98,6	78,6	111,3

Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма лайăх хатĕрленеççĕ

Ишлей районĕнчи «Верный путь» колхоза выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тивĕçлипе хатĕрленеççĕ.

Колхозăн йышлă выльăх-чĕрлĕхне сителĕклĕ апат хатĕрлессишĕн кашни колхозникпа колхозница, фермăра ĕçлекенсем пĕтĕм вăйя хурса ĕçлеççĕ. Колхоз 27 гектар утă çулса, типĕтсе, капана хыврĕ. Фермăра ĕçлекенсем хăйсем 25 тонна силос хывнă.

Ку колхоз кăçал çуркунне пăрусем валли вите тунă, халĕ кашни выльăх валлиех çурт çитет. Выльăх витине тасатса, дезинфекциленĕ.

Фермăра ĕçлекенсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. М. Филиппов сысна пăхнă çĕрте 8 çул ĕçлет ĕнтĕ. Вăл ĕçе вĕренсе çитнĕ; çамрăксене ĕçре пулăшать.

Фермăра выльăх шучĕ çулран-çула хутшăнса пырать. Ферма колхоза пысăк тупăш парать. Ку вăл унта ĕçлекенсем ĕçе юратса, тăрăшса ĕçленинчен те чылай килет.

В. ГУСЬКОВ.

Ответлăха туймаççĕ

КАЛИНИНО. Районра чылай колхозсенче иртнĕ çултах лашасем кĕçĕпе чирлетчĕç. Сăмахран, Чалăм-Кăкшăм колхозĕнче кĕçĕ чирĕпе 3 лаша вилнĕ. Çак колхозран чир кӳршĕри Кăкшăм, Кӳлхĕрринчи колхозсене те сарăлчĕ.

Колхоз председателĕсемпе конюхсем чирлĕ лашасене сывă лашасенчен уйрăм тытмаççĕ, вĕсене ячĕшĕн çеç эмел сĕркелеççĕ.

Райçĕрĕç пайĕн ветеринари врачĕсем çавăн пек колхозсене час-час кайса çӳресе васкавлă та çирĕп мерăсем йышăнмаççĕ. Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ И. Николаев та: «пĕр ернĕ чире сыватма çăмăл мар, лашан тирĕ хулăм», тесе лăпланса ларать. Лаша кăрчанкипе кĕрешесси паянхи ĕç, ăна пĕтерессишĕн пĕтĕм вăйя хурса кĕрешмелле.

Пăрмасри пуçламĕш шкулăн кунçулĕ

1871 çулта Шупашкар уездĕнчи земство Пăрмас ялĕнче таврари ялсенчи ачасем валли шкул уçнă. Ăна земствăн Пăрмасри училищи тесе ят панă. Ку шкула Шупашкарпа Çĕрпӳ уездĕнчи ачасем вĕренме çӳренĕ.

Малтанхи вăхăтра шкулта пурĕ те 40—50 ача кăна вĕреннĕ. Хĕрачасем шкулта пачах та пулман. Вĕренекен ачасенчен чылайăшĕ шкултан вĕренсе тухиччен вĕренме пăрахнă, мĕншĕн тесен чухăн çынсен ачисене вĕренме йывăр пулнă.

1903 çулччен шкулта пĕр чăваш ачи те вĕренмен. Малтанхи вăхăтра ачасене уйрăм çынсен килĕсенче вĕрентнĕ. 1899 çулта халăхран укçа пухса Пăрмасра шкул туса лартнă. 1911 çулта вара шкул валли тепĕр çурт туса лартнă. Ку çурт малтанхинчен илемлĕрех те çутăрах пулнă. Çак вăхăта ачасен йышĕ те ӳснĕ. Анчах учительсем час-часах улшăннă пирки вĕренӳ пахалăхĕ тивĕçлĕ вырăнта пулман. Шкул уçăлнăранпа пурĕ 45 учитель улшăннă. Мария Папеева 25 çул, Евдокия Некрасова 23 çул хушши çак шкулта ĕçленĕ.

Пăрмас ялĕнчи пĕр ватă старик Павел Смирнов каланă тăрăх, 1882 çулта ку шкула Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕн директорĕ Иван Яковлевич Яковлев тата Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи шкулсен инспекторĕ Илья Николаевич Ульянов (Ленин ашшĕ) пырса кайнă.

Земствăн Пăрмасри училищинчен вĕренсе тухнисенчен Октябрьти революциччен аслă шкултан вĕренсе тухнисем пĕр çын, ватам пĕлӳ илнисем 6 çын пулнă.

1931 çулта Пăрмасри шкула пуçламĕш шкул тесе ят панă. Ку тĕле вара ачасен йышĕ те, вĕренӳ пахалăхĕ те чылай ӳснĕ. 1938 çулхи сведенисем тăрăх, Пăрмасри пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнисенчен учительсем 39 çын, фельдшерсем 6 çын, агрономсем 4 çын, техниксем 14 çын, художниксем 3 çын, врачсем 10 çын, инженерсем 12 çын, прокурорсемпе судьясем 3 çын, парти работникĕсем 4 çын пулнă.

Пăрмасри пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнисем чылайăшĕ Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăррăн çапăçса орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулчĕç. Çак шкултан вĕренсе тухнă Василий Мочалов Мускав хулинчи çар трибуналĕн председателĕн заместителĕ, Илья Макаров Çар трибуналĕн членĕ пулса ĕçлеççĕ.

Эпĕ учитель ĕçĕнче 42 çул ĕçлетĕп. Анчах учитель ĕçĕ хальхи пек нихăçан та хисепре пулман. Партипе правительство мана темиçе хутчен те наградăсем пачĕç. 1939 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ мана тата эпĕ ертсе пыракан шкула Хисеплĕ грамота парса наградăларĕ. 1940 çулта РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ ятне пачĕ. 1944 çулта РСФСР Сутĕç Халăх Комиссарĕ мана «Халăха çутта кăларас ĕçĕн отличникĕ» значокпа наградăларĕ.

Манăн ĕçе çакăн пек пысăка хурса хакланăшăн эпĕ партипе правительствăна тата хамăрăн аслă çулпуçне Сталин юлташа чĕререн тав тăватăп. Çав наградăсем мана татах та çĕнĕ вăй парса хавхалантараççĕ. Эпĕ халь 59 çул тултарса, 60 кайрăм, анчах çапах та манăн хама пĕрре те ватă тесе шутлас килмест. Çак телейлĕ çĕршывра манăн татах та нумай çулсем пурăнас килет, тăван халăхшăн мĕнпур вăя хурса ĕçлес килет.

Эпир, Пăрмас ялĕнчи пуçламĕш шкулти учительсем, йывăр та тумхахлă пурнăç çулне утса тухнă хамăрăн шкулăн чысне нихăçан та вăйсăрлатмасăр, ялапах çӳлте тытса тăрăпăр.

А. НЕКРАСОВ,
РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ-орденоносец.
КУСЛАВККА РАЙОНĔ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ларăвĕ çинчен пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн сентябрĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрлахи апат хыççăн пулса иртнĕ ларăвĕнче В. М. Молотов председатель пулнă. Ларура, малтанхи пекех, кун йĕркинче тăракан ыйтусене сӳтсе-явнă. Çитес лару тунтикун ирхине 11 сехетре пулмалла.

ФРАНЦИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔ БИДО МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЯЧĔПЕ ТУСА ИРТТЕРНĔ ЙЫШĂНУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 21-мĕшĕнче каçхине Францин Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо патĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

ВЕНĂРИ СОЮЗНИКСЕН КОМЕНДАТУРИН ЛАРĂВĔ

ВЕНА, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Венăри союзниксен комендатурин юлашки ларăвĕнче председатель Америка генералĕ Льюис пулнă. Ларура Вена халăхне малашне апат-çимĕç парса тăрас ыйтăва тата беженецсем çинчен сӳтсе-явнă. Венăран ют çĕршыв çыннисене хăвăртрах илсе каймалли мерăсене туса хатĕрлемешкĕн специальнăй комисси тунă. Çав комиссин Австрие оккупациленĕ тăватă державăн командованине хăйсен сĕнĕвĕсене туса памалла.

Ларура çавăн пекех тата спорт комиссийĕ союзниксен оккупациленĕ çарĕсем хушшинче спорт ăмăртăвĕсем тăвасси çинчен панă сĕнӳсене ырланă.

АМЕРИКĂН ОККУПАЦИ ВЛАÇĔСЕН АВСТРИРИ ĔÇĔСЕМ

ВЕНА, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Линц хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн оккупаци влаçĕсем çак кунсенче Тури Австрири Обертраун ятлă вырăнта, нимĕçсен çарĕ аллинче тăнă апат-çимĕç тата тавар складне вăрласа пĕтернĕ пирки, ухтарусем тунă. Кашни çурта тенĕ пекех ухтарса тухнă. Вăрланă пурлăха чылай тупнă. Кунти бургомистра тата жандармери пуçлăхне тытса хупнă.

НЕАПОЛЬ ХУЛИНЧИ РАБОЧИСЕН ПРОТЕСĔ

РИМ, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио çапла пĕлтерет: Неаполь хулинчи рабочисене союзниксен влаçĕсем ĕçрен кăларнă та вĕсем вырăнне нимĕçсен тыткăнри çар çыннисене лартнă. Çавăн пирки рабочисем хирĕçеççĕ. Сентябрĕн 19-мĕшĕнче ирхине Неаполь хулинчи хăшпĕр районсенче демонстрацисем пулса иртнĕ. Рабочисем нимĕç шоферĕсем ертсе пыракан машинăсем çине ларма килĕшмен. Демонстрантсен колоннисем хула урамĕсем тăрăх пынă. Вĕсем плакатсем çинче çакăн пек çырнă: ĕçрен кăларнă рабочисене пурне те каялла ĕçе илмелле, тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсен ĕçĕпе усă курас йĕркене пăрахăçа кăлармалла, тенĕ.

Неаполь портĕнчи рабочисем Рима делегаци янă. Делегаципе пĕрле Ĕç конфедерацийĕн секретарĕ Липпадри пулнă. Çав делегацие Итали министрĕсен советĕнче йышăннă. Çавăн пекех тата делегаци Союзниксен Италири комиссийĕ çумĕнчи Ĕç комиссине пынă. Вĕсем унта та хăйсем мĕн ыйтнине каласа панă.

ИТАЛЬЯНЕЦСЕНЕ ĔÇРЕН КĂЛАРСА ВĔСЕМ ВЫРĂННЕ ТЫТКĂНРИ НИМĔÇСЕНЕ ЛАРТНĂ ПИРКИ НЕПОЛЬРЕ ХУМХАНУСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

РИМ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 20-мĕшĕнче Итали премьер-министрĕ Парри Неаполе пынă. Çавна май çав хулара портри 5.000 рабочие ĕçрен кăларса вĕсем вырăнне тыткăнри нимĕçсене лартнине хирĕç демонстрацисем тепĕр хут пуçланса кайнă. Демонстраци вăхăтĕнче реакциллĕ çынсем провокациллĕ ĕçсем тунă.

Ĕç палати лару тунă вăхăтра (премьер-министр Парри çав ларура пулнă) палата çуртне умне пухăннă халăх нимĕçсене ĕçе лартнине тата вĕсем хулара пурăннине хирĕç питĕ хытă протестленĕ, ĕççĕр юлнă çынсене пулăшма хушнă. Министрсен совечĕн председателĕ ларнă автомобиль халăх хушшипе аран иртсе кайнă, премьер-министр секретарĕн автомобильне сиенленĕ.

Парри унтан кайнă хыççăн демонстрантсем, реакциллĕ çынсем хĕтĕртнипе, Ĕç палатин çуртне кĕрсе кайнă та унта пур япалана та аркатса тăкнă, полици вĕсене хирĕç нимĕн те туман. Ĕç палати çавăн хыççăн васкаса лару тунă та, хăй ĕççĕр юлнă рабочисемпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартнă, «реакциллĕ çынсем, Неаполь хулинчи ĕççыннисем йывăр пурнăça кĕрсе ӳкнипе усă курса, провокациллĕ ĕçсем тунине» хытă сивленĕ.

Неаполь портĕнче ĕçлекен рабочисем митингсемпе пухусенче хăйсем ĕç палатипе пĕр шухăшлă пулнине палăртнă, «нимĕншĕн те ответ тытман çынсен провокацине» хытă сивленĕ.

ГАРОЛЬД ЛАСКИ «ХĔВЕЛАНĂÇ БЛОКĔ» ТĂВАС ПЛАНСЕМ ÇИНЧЕН

АФИНЫ, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Лейбористсен партийĕн исполкомĕн председателĕ Гарольд Ласки профессор çак кунсенче Греци хаçачĕсен корреспонденчĕпе калаçнă. Ку корреспондент Грецие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен фронт майлă çырса тăракан хаçатсен корреспонденчĕ пулса тăрать. Çав корреспондент Ласкирен «хĕвеланăç блокĕ» туса хурас плансем пирки мĕн шухăшлани çинчен ыйтнă.

«Ун пек блок туни Совет Союзне хирĕç пырать пулсан, эпĕ уншăн тăмастăп, —тенĕ Ласки.—Эпĕ Европăра Совет Союзĕпе çыхăнса ĕçлессишĕн тăратăп. Эпĕ хам çакна шанса тăратăп: фашизма хирĕç кĕрешнĕ çĕршывсен пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе татса пама пулать; çавăнпа та, ман шухăшпа, пĕтĕм Европăра пĕр авиаци компанийĕ тăвас вырăнне кашни çĕршыврах хăйне уйрăм авиаци компанийĕсем туса хуни кулăшла ĕç пулать.

Эпĕ каллех калатăп: Совет Союзĕ çав блока хирĕç пулсан, эпĕ хамăн мĕнпур вăйпа хĕвеланăçĕнчи блока хирĕç кĕрешетĕп, мĕншĕн тесен эпĕ çапла шутлатăп: Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх мирлĕ пурнăçпа малалли прогреса никĕсĕ пулса тăрать.

КРИСТМАС МЕЛЛЕР ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ КАЛАНИ

КОПЕНГАГЕН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Экстрабладет» хаçат çапла пĕлтерет: «Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче сентябрĕн 18-мĕшĕнче пулнă пресс-конференцире Кристмас Меллер хĕвеланăçĕнчи державăсен блокне тăвас план çинчен каланă.

Эпĕ çапла шутлатăп, — тенĕ вăл:— Дани политики хăйĕн задачисене Пĕрлешнĕ нацисемпе пĕрле пурăнса пурнăça кĕртесси пулать, унăн çавăн пек блоксене хутшăнмалла мар. Ытти енчен илсен, Дани, çурçĕрти ытти çĕршывсем пекех, хĕвелтухăçĕпе те, хĕвеланăçĕпе те пĕр пекех лайăх çыхăнса тăмалла».

Япони тĕлĕшпе тытса пымалли политика çинчен Шурă Çурт калани

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт Япони тĕлĕшпе малтанхи вăхăтра тытса пымалли пĕтĕмĕшле политика çинчен заявлени пичетлесе кăларнă. Çав заявление государство департаменчĕ тата çар министерствипе тинĕс министерстви пĕрле çырса хатĕрленĕ. Ăна США президенчĕ Трумэн ырланă, вара ĕçе кĕртсе пыма Макартур генерала тата тивĕçлĕ департаментсемпе агентствăсене панă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, тенĕ çав заявленин пĕрремĕш пайĕнче, Япони тĕлĕшпе малтанхи вăхăтра тытса пымалли политикин тĕллевĕсем çаксем пулаççĕ:

А. Япони США-на тата пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăха урăх хăратса тăма ан пултартăр, ăна çавăн пек хăратма пултармалла мар туса хумалла.

Б. Японире мире юратакан ответлă правительство туса хумалла. Çав правительствăн ытти государствăсен прависене хисеплемелле тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен тĕллевĕсене, Пĕрлешнĕ нацисен уставĕн принципĕсенче кăтартнăскерсене, пурнăçласа пыма пулăшмалла.

Çапла тума пултăр тесе, Япони аллинче Хонсю, Хоккайдо, Кюсю, Сикоку утравĕсене тата вĕсем тавра ларакан пĕчĕк утравсене çеç хăвармалла. Японие пĕтĕмпех хĕçпăшалсăрлантармалла тата унта милитаризм йĕркине пĕтерсе лартмалла. Милитаристсене политика, экономика тата общество пурнăçĕнчен пĕтĕмпех пăрса ямалла. Япони халăхне демократиллĕ ирĕклĕхсене сарса пыма, этемлĕхĕн тĕп прависене, уйрăмах тĕн, пуху, сăмах тата хаçат-журнал ирĕклĕхĕсене, хисеплеме вĕрентмелле. Япони халăхне мирлĕ вăхăтра кирлĕ япаласем туса тăракан экономикине аталантарма май парĕç.

Заявленин ытти пайĕсенче союзниксен Японири влаçĕ тĕлĕшпе тата политикăпа экономика ыйтăвĕсем тĕлĕшпе Америка политики мĕнле пулмалли çинчен каланă.

МАКАРТУР ГЕНЕРАЛ АБЭ ГЕНЕРАЛА ТЫТСА ХУПМА ХУШНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токио хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Макартур генерал Япони правительствине Корейăра генерал-губернатор пулнă Нобуюки Абэ генерала тĕрмене илсе пыма хушнă.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕН ПĔР ПАЙНЕ ÇЫВĂХРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН КĂЛАРСА КАЯССИ

КАИР, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ Джайлс çапла пĕлтернĕ: кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенчен халĕ унта тăракан Америка çарĕсен висĕ пайĕнчен икĕ пайне кăларса кайма йышăннă, тенĕ.

ТИТО МАРШАЛА 1-МĔШ КЛАСС ГРЮНВАЛЬД ХĔРЕСĔПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

БЕЛГРАД, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири радио çапла пĕлтерет: Польша Халăх Совечĕн Президиумĕ Тито маршала Польша республикин чи аслă орденĕпе—1-мĕш класс Грюнвальд хĕресĕпе наградăласси çинчен указ пичетлесе кăларнă.

ФИНЛЯНДИРЕ ВĂРТТĂН СКЛАДСЕМ ТУПНĂ ПИРКИ ТЫТА-ТЫТА ХУПНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Финляндире хĕçпăшалсен вăрттăн склачĕсене тупнă. Çавна май Финляндин шалти ĕçсен министрĕ Лейно радио тăрăх çапла тухса каланă: çав ĕç пирки 200 çынна тытса хупнă, вăл шута Финлянди çарĕнче тăракан темиçе аслă офицер кĕрет, тенĕ.

ЕВА БРАУН ÇИНЧЕН КАЛАКАН ХЫПАРСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «П. М.» хаçатăн корреспонденчĕ Бернштейн нумай пулмасть Германирен таврăннă. Бернштейн шутланă тăрăх, Гитлер еркĕнĕ Ева Браун пурăнать. Бернштейн çапла пĕлтерет: Ева Браун патĕнче тарçăра пурăннă хĕрарăм ăна икĕ уйăх каярах Мюнхен хулинче курнă. Ева Брауна американецсен икĕ офицерĕ хуралласа пынă.

ГЕНРИ ФОРД ХĂЙ КОМПАНИЙĔН ПРЕЗИДЕНТĔНЧЕН ТУХНĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Детройтран пĕлтернĕ тăрăх, Генри Форд Форд компанийĕн президентĕнчен тухнă. Генри Форд халĕ 82 çул тултарнă. Компанин президентне Генри Фордăн внукне лартнă.

МЭРРЕЙ ĔÇСĔРЛĔХ ПУЛĂШĂВĔ ÇИНЧЕН ТĂРАТНĂ ЗАКОН ПРОЕКТНЕ СЕНАТ ЙЫШĂНМАННИ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Производство профсоюзĕсен конгресĕн председателĕ Мэррей пичет представителĕсене çапла каланă: ĕçсĕрлĕх пирки пулăшу памалли законăн проекчĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕнче сенат йышăннăскер, Трумэн конгреса панă сĕнӳ пекех. Унăн сăмахĕ тăрăх, ĕçсĕрлĕх пирки ытларах пулăшу памалли сĕнĕве йышăнмасăр, сенаторсем пĕчĕк ĕçукçишĕн, пурнăç условийĕсене начарлатассишĕн, экономика тĕлĕшĕнчи вăйлă кризисшăн сасăларĕç. Çав пулас кризис 1929 çулхи кризисран та вăйлăрах пулмалла. Мэррей çапла асăрхаттарнă: тепĕр çул конгреса суйланă чухне рабочисем çак сĕнĕве сенаторсем йышăнманнине аса илĕç. Унтан Мэррей представительсен палатине законăн сенат тăратнă проектне сирсе ярса Трумэн тăратнă проекта ырлама чĕнсе каланă.

ФРАНЦИРИ ДЕМОКРАТИЛЛĔ ОРГАНИЗАЦИСЕН КАНАШЛĂВĔ

ПАРИЖ, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 18-мĕшĕнче коммунистсен, социалистсен тата радикал-социалистсен партийĕн, çавăн пекех тата Ĕç конфедерацийĕпе Этем прависен лигин представителĕсем тепĕр хут пухăннă, вĕсем де Голль суйлавсене ирттермелли йĕркене улăштарма килĕшмен пирки тумалли ĕçсене сӳтсе-явма пухăннă. Канашлу пĕтнĕ хыççăн çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Демократиллĕ организацисен представителĕсем, сентябрĕн 18-мĕшĕнче Ĕç конфедерацийĕн çуртĕнче пухăнса, Леон Жуо председатель пулса ертсе пынипе, хăйсен маларах йышăннă решенийĕсене пурнăça кĕртесси çинчен калаçнă. Вĕсем çак решенисене пурнăça кĕртесси çинчен калаçнă: 1) Халăха суйлав законĕ тĕрĕс марри çинчен сӳтсе-явма чĕнессине. 2) Тăшмана хирĕç тăракан наци совечĕн программине правительство программи вырăнне кăларса тăратассине».

Кунсăр пуçне, канашлу Парижра, хĕллехи велодромра, суйлав законĕ тĕрĕс марри çинчен пĕлтермешкĕн пысăк митинг пухма йышăннă. Çав митинга хатĕрлеме подкомисси тунă.

ФРАНЦИПЕ СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ПРОФСОЮЗСЕН КОМИТЕЧĔН СЕССИЙĔ

ПАРИЖ, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Франципе Совет Союзĕнчи профсоюзсен комитечĕн сессийĕ пĕтнĕ. Комитет пĕрсаслăн çакăн пек резолюци йышăннă: «Францири Пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕ тата Совет Союзĕнчи ВЦСПС пĕррремĕшпе иккĕмĕш сессисем хушшинче (1945 çулхи январь—сентябрь) тунă ĕçсем çинчен докладсем итленĕ хыççăн Франципе Совет Союзĕнчи профсоюзсен комитечĕн 2-мĕш сессийĕ çакна палăртса хăварать: çак комитета туса хуни тĕнчери профсоюзсен пĕрлĕхне çирĕплетсе пыма нумай пулăшрĕ тата уйрăмах Франципе Совет Союзĕнчи профсоюзсем пĕр-пĕринпе туслăн çыхăнса тăрас ĕçе çирĕплетрĕ».

«УНИТА» ХАÇАТ ИТАЛИРИ РЕАКЦИОНЕРСЕН ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН

РИМ, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» хаçатра «Карабинерсен командованийĕ вăрçă вăхăтĕнчи пек мерăсем йышăннă» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра карабинерсен генералĕсем Брюнеттипе Спано алă пуснă циркулярсен текстне пичетленĕ. Çав циркулярсенче восстани пулас пулсан, мĕнле мероприятисем йышăнма кирлине кăтартса панă. Восстание вара сентябрĕн юлашки кунĕсенче тума коммунистсем хатĕрлеççĕ пулать. Çак пĕлтерĕве пичетленĕ май, «Унита» хаçат çапла ыйту парать: «Çĕршыври монархистла çынсем, коммунистсем пулман каварлашăвĕсене пĕтеренçи туса, влаçа хăйсен аллине тытса илме хатĕрленмеççĕ-ши?»

КĔСКЕН

▲ Болгари правительстви парламент суйлавне ноябрĕн 18-мĕшĕнче ирттерме йышăннине регентсем ырланă, вĕсем çав суйлава ирттерме хушакан указа алă пуснă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Фельетон

Ляпкин-Тяпкин пурăнать иккен

Суд çинчен çырасси çĕнĕ япала мар. Тĕнче литературинче çав ĕçе нумай енчен çутатса панă. Права йĕркипе тытса пыракансен тĕрлĕ типĕсене сăналаса кăтартнă. Çав ĕмĕрхи литература пуянлăхĕ çумне эпир мĕн те пулин хушас тесе ĕмĕтленместпĕр. Эпир пĕр питĕ «конкретлă» факт çинчен çеç каласа парасшăн.

...Ку ĕç 1942 çултанпах тăсăлать, анчах ниепле те татăлма пĕлмест.

Красноармейски районри Вăта-кас ял çынни Андрей Федорович Скворцов, халĕ районри пĕр ответлă ĕçре ĕçлекенскер, хăйĕн арăмне — Анфиса Николаевна Скворцовăна 4 çулхи ачипе пĕрле килĕнчен уйăрса (хăваласа) кăларса янă. Мĕншĕнне—пĕлместпĕр. Скворцов чĕри ăшне кĕме шутламастпăр. Ĕç — кунта мар, пĕтĕм мыскари—малалла.

Ачине мĕнле усрасси çинчен ашшĕ шухăшламан пулсан, амăшĕн шухăшламах тивнĕ. Ытла та нимĕнсĕрех кăларса янă-çке вĕсене çав Скворцов! Этем — çерçи мар, вăл, хуралтă çунаттинче пăва саварса, çул çине тăкăнса юлнă пĕрчĕсене сăхса пурăнма пултараймасть. Этемме тумтир те, пурăнмалли кĕтес те, апат-çимĕç те кирлĕ.

Ача амăшĕ, Скворцовран мĕн те пулин тивĕçлине шыраса илес тесе, ĕçе суд аллине парать. Анчах Красноармейски районри халăх судьи Борисов «суд çинчи ĕç—такана çинчи шыв» текен авалхи сăмаха хальхи саманара та çирĕп пурнăçа кĕртсе пырать, иккен.

Пĕр аллипе вăл, Скворцова гражданкăпа унăн ачи валли Скворцов гражданинран 14.700 тенкĕ шыраса илмелле, тесе приговор çырать, тепĕр аллипе çав приговора пурнăça кĕртме пур майсемпе те чарса тăрать. Тĕрĕссипе, Борисовăн çак тепĕр алли пушах та мар темелле, мĕншĕн тесен унпала ăна Скворцовран час-часах черкке, мĕнле те пулин парне (çук, çук взятка мар!) тытма лекет.

Борисов судья çумне пырса çыхламмаллиех çук. Вăл закон йĕркисене пĕлет. Халĕ акă вăл çак фельетона вулать те: —Суя! Тӳсме çук элек!—тесе çухăрса пăрахать.

Вăл приговор йышăннă—тĕрĕс тунă, приговора пурнăça кĕртме судисполнителе, Данилова, хушнă—татах тĕрĕс тунă. —Мĕн çыхланатăн эс, фельетонист!

Анчах такана çинчи шыв виçĕ çул хушши чӳхенет ĕнтĕ—ни тăкăнать, ни тăкăнмасть, ытларах пăтранса пырать кăна.

Судисполнитель Данилов, исполнительнăй лист алла илнĕ хыççăн тӳрех ĕçе тытăнас вырăнне, «çул майăн тенĕ пек», малтан Скворцов патне кĕрсе тухать. Лешĕ, Скворцовĕ ĕнтĕ, тĕшмĕш çын мар пулин те, хăй ăшĕнче çаплах авалхи «çул чĕлхине» мăкăртатать:—Тĕкеç первей килет те юрлать, çын ăна епле итлет—юратать, ман халапа çавнашкал юратчăр. Шăпчăк килет çуркунне, юрлать, çын ăна епле итлет—юратать, эп калаçнине те çавнашкал юратчăр!

Мĕн калăр эсир,—тутлă чĕлхене пыл витмест, теççĕ те Скворцовăн чĕлхине те исполнительнăй лист витес çук. Судисполнитель Данилов: «гр-н Скворцовăн кил-çуртне вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн пурлăхĕ пурри курăнмарĕ, вăл 14.700 тенкĕ тӳлеме пултараймасть», тесе акт çырать те ăна Борисов судья аллине парать. Паллах, Даниловăн мухмăрла куçне мĕнле пурлăх курăнтăр ĕнтĕ!

Анчах Скворцова гражданкăн ачине судисполнитель çырса панă актран пиншак çĕлетсе пама çук-çке-ха! Скворцова юлташ Шупашкара, Наркомюста, жалоба çырать. Шупашкартисем Борисов судьяран çак волокитăна мĕншĕн вăрахчен сĕтĕрсе пынине ăнлантарса пама ыйтаççĕ, судисполнителĕн актне пăрахăçлама хушаççĕ. Красноармейски районри прокурор Николаев юлташ та Скворцов гражданинăн хăйĕн ачипе унăн амăшне тӳлемелĕх пурлăх пуррине палăртать, районри халăх судĕнчен Даниловăн çӳлерехре кăтартнă актне улăштарма ыйтать. Тĕрĕссипе, Скворцовăн 45.000 тенкĕлĕхе яхăн пурлăх пулнă.

Даниловшăн хура пĕлĕтсем капланса килнĕ пек, кĕçех тăвăл тухас пек туйăнать. Вара вĕсем—судисполнитель Данилов, «Осо» колхоз председателĕ Федоров тата Скворцов хăй—виççĕн пĕрле пухăнса канаш тăваççĕ. Куçа курăнса тăракан пурлăха мĕнле те пулин пытармалла! Ĕçеççĕ, çиеççĕ. Скворцовăн амбарĕнчи мунчине, хуралтисене колхоза сутаççĕ. Анчах укçине Скворцовĕ хăй кĕсъинех илсе чикет. Данилов, ячĕшĕн тенĕ пек, Скворцовран 180 тенкĕ (!) шыраса илет.

Кăçалхи сентябрĕн 13-мĕшĕнче Скворцова гражданка судисполнитель патне пырсан, Данилов ăна юлашки татăклă сăмах калать:

— Сан валли эпĕ 180 тенкĕ шыраса илтĕм. Манран эсĕ урăх нимĕн те ан ыйт. Эпĕ тек шырамастăп. Ман çапла тек курас та килмест, йăлăхтартăн. Мана пурпĕрех нимĕн те пулмасть.

Анчах Данилов шыраса илнĕ 180 тенкĕ укçана та Скворцовăна паман, çав пĕтĕмпе ывăнса, чунĕ тăвăнса çитнĕ хĕрарăма вăл хăйĕн кабинетĕнчен хаяррăн кăшкăрса, хăваласа кăларса янă. Ку çеç те мар, Скворцова гражданкăна госпошлина укçине те ку таранччен шыраса илсе паман.

Скворцова гражданка, хăйпе тивĕçлине шыраса илес тесе, пайтах хут çырса пĕтернĕ, нумай çухрăм утнă, Шупашкара та килсе пăхнă, Борисов судьяран та пайтах пулăшу ыйтса йăлăннă.

Пĕринче çапла Борисов, Скворцова гражданка патне килне пырсан (пулăшу пама пынă тесе ан шутлăр!) сăмах майĕн:

— Сĕрмен урапа макăрать, типĕ кашăк çăвара çурать,—тесе каласкаласа ларнă.

Хыпăнса ӳкнĕ хĕрарăм Борисова эрех ĕçтернĕ. Анчах права сыхлавçин шыçĕ кунпа сырлахман. Вăл хăюллăнах 5 пăт тырă ыйтнă. Кам мĕнле вĕт! Гоголĕн «Ревизор» ятлă комедийĕнчи судья Ляпкин-Тяпкин çапларах калаçнă:

— Мĕне шутлатăр эсир, Антон Антонович, çылăхсем тесе? Кашнин хăйне кура çылăх. Эпĕ пурне те тӳрех калатăп: взятка илетĕп, анчах мĕнле взятка?—Вĕшле йыт çурисем! Ку вăл пачах урăхла ĕç.

Çапла çав, кам—вĕшле йыт çури, кам—5 пăт тырă! Кашнин çылăхĕ расна.

Анчах ăçтан тупмалла пулнă-ха тăлăх хĕрарăмăн сасартăках 5 пăт тырă? Вăл тупса параймаи, Борисов вара ăна:

— Хăвăр мĕн шыранине Наркомюстран кайăр та шыраса илĕр,—тесе хăварнă.

Халăх судьи вырăнне йышăнса тăракан çак Борисов хушаматлă çын çӳлерех асăннă Ляпкин-Тяпкин пекрех шухăшлать пулас. Лешĕ хăй вăхăтĕнче тата çапла калаçнă:

— Эпĕ кун пирки хама лăпкă туятăп. Чăн та ĕнтĕ, камах килсе кĕрес-ха уездри суда? Ытах, кам та пулин пĕр-пĕр хута тытса пăхас пулсан, ăна хăйĕн пурнăçĕ те пурнăç мар пулнă пулĕччĕ. Акă эп судья пуканĕ çинче вунпилĕк çул ларатăп, хăш чухне пĕр-пĕр хута тимлесе вулама пикенетĕп те—э! алăпа кăна сулатăп. Чăнлăхпа суялăх ăçтине унта Соломон хăй те шыраса тупас çук!

Ниушлĕ тĕрĕсех калать Ляпкин-Тяпкин? Ниушлĕ çав «уездри суда» республикăри Наркомюстран никам та çитсе курмĕ, чăнлăхпа суялăх ăçтине те шыраса тупмĕ? Пулма пултараймасть ун пек. Совет гражданкин, Скворцова юлташăн, тивĕçлĕхне совет законĕ тăрăх хӳтĕлеме кирлĕ.

Афанасий ЙĔП.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн —2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00262 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 59 42 п. л. Тираж 16.000 экз.